ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6 +

25 (4490) №, 2016, июнь (çĕртме), 30
1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă

Хакĕ ирĕклĕ
Индексĕ: 54802

ПАТТĂРЛĂХ

# Иртнĕ çулла...

**Ыран ирхине мĕнле çанталăк пулассине пĕлме хĕвел аннине, пĕлĕт хĕрри еплерех куранннине сăнарĕ Паша. Паян хĕвеланăç сарăрах. Тӳпере куçман пĕлĕтсем çеç, анакан хĕвелпе ылтăнланнăскерсем мĕн тери илемлĕ курăнаççĕ. Апла-тăк ыранхи кун лăпкă пулатех.**



Максим (сылтăмра) хăйне иккĕмĕш пурнăç парнеленĕ Пашăпа.

«Çумăрлă çанталăкра кĕнеке вулама юрататăп пулсан, тавралăха савса хĕвел пăхнă кун пулла каймаллах», – тесе арçын ача çав каçах ăман хатĕрлеме шухăшларĕ. Кĕреçе йăтса пахчана вăскарĕ. Тислĕк купи çывăхĕнчи хура çĕре ылтăн купи сирнĕ пек тирпейлĕн хăрах енчен салатса сăнама тапратрĕ. Авкаланса выртакан ăмансене хавхаланса пуçтарчĕ. «Ыран та унчченхиллех киле тулли савăтпа таврăнăп, вăлтана пысăк пулăсем кĕрессе пĕрре те иккĕленместĕп. Ăшаласа та çийĕпĕр, шӳрпе те пĕçерĕпĕр», – терĕ ăмансем çине тулли кăмăлпа пăхса.

– Пăчанар кӳллине каясшăн-и? Унта кирек хăçан та ăнăçаканччĕ, – терĕ кӳршĕ ăна асăрхасан.

Пăчанар кӳлли... Çак сăмаха илтсенех унăн чунĕ сӳ! турĕ. Нимĕнле мар пулса кайрĕ, ассăн сывларĕ. Унтан хăйне алла илчĕ.

– Таврара урăх пĕве çук-им? Чун туртмасть унта. Тунмастăп, пулă вăйлă кĕрет вăл вырăнта. Пысăкки те, пĕчĕкки те. Анчах маншăн текех ют çав кӳлĕ. Аса та илес килмест, – терĕ. Сăнĕ салхуланчĕ.

...Пĕлтĕрхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ. Çанталăк шăрăх. Ултăмĕш класран ăнăçлă вĕренсе тухнă Павел Федотовпа иккĕмĕш сыпăкри шăллĕ Даниил вăлтасем йăтса, шăкăл-шăкăл калаçса та йăл кулса Пăчанар кӳлли еннелле васкарĕç. Утса мар, чупса... Хуларан килнĕ шăллĕ те яла çав тери килĕштерет вĕт-ха.

Палăртнă вырăна çитсен вăлтасене шыва ячĕç. Яланхиллех савăк кăмăлпа вăлта хулккисем çине тинкерсе çеç ларатчĕç – инçех те мар шыва кĕрекен ачасем тĕлĕнче хыттăн кăшкăрни илтĕнчĕ. Ялтах сиксе тăчĕ Паша. Шывра хăмпăсем явăнса тухнине курсан унта кам-тăр путма тытăннине ăнланчĕ. Ним шухăшламасăрах çав вырăна чупрĕ. Сывлăш çаврăнчĕ те икĕ-виçĕ метр шалалла ишсе кайса кăкăр тулли сывларĕ. Шыва чăмрĕ. Аялта тĕттĕм, шăм-шак сăр-сăр çӳçенсе кайрĕ. Ĕç-пуç чи тарăн вырăнта пулса иртнĕрен путакана çăлма пĕрре те çăмăл пулмарĕ. Алăпа мар, урасемпе унăн кĕлеткине çаклатса пĕтĕм вăйран çыран хĕррипелле ишрĕ. Кĕçех шăллĕ Даниил та ăна курăк çине илсе тухма пулăшрĕ. Путакан кам пулнине тинех палласа илчĕ Паша. Пĕр шкулта вĕренекен иккĕмĕш класри Максим Владимиров... Арçын ача сывламаннине кура пĕрремĕш пулăшу пачĕ. Максим хускалса илчĕ, çăварĕнчен кăпăк тухма тытăнчĕ. Ăна хăйĕн кĕпипе вĕçĕмсĕр шăлса тăчĕ. Çынсем пуçтарăнчĕç... Çук, ку ӳкерчĕке урăх пăхса тăма пултараймарĕ Паша. Хăйĕнчен мĕн килнине пурнăçланăскер вăлтисем пирки мансах килне халтан кайнăн вăйсăррăн ялалла утрĕ...

*Элиза ВАЛАНС.*

Етĕрне районĕ,
Кăкшăм.

Тема тăсăмĕ 5-мĕш стр.

## Асăрханăр! Сыхланăр!

*Туссем! Шăрăх кунсем тăнăран сирĕнтен чылайăшĕ кӳлĕ е пĕве хĕррине васкать. Хĕвелпе хĕртĕнни, уçă сывлăшра пулни, шыва кĕни усăллă. Анчах кашни ялалан хăйĕн йĕрки пур. Тимлĕхе нихăçан та ан çухатăр: юханшыв хĕррине аслисемсĕр ан кайăр! Шывăн турачĕ çук – çакна ан манăр. Пĕлмен вырăнта ишме, тарлă ӳт-пӳпе шыва кĕме юраманнине ялахах асра тытăр. Ăнсăртран инкек сиксе тухрĕ пулсан çийĕнчех аслисене пĕлтерĕр.*

ЕПЛЕ АВАН!

# Çу пек çемçе кунĕсем...



Çак хаваслă вăхăта эпир тăхăр уйăх кĕтрĕмĕр. Çитрĕ вăл, çитрĕ те пĕр уйăх сисĕнмесĕрех тенĕ пек иртсе те кайрĕ. Çапах та çав кăмăллă вăхăт пирĕнтен кашнине савăнăç нумай парнелерĕ. Вăйă-кулă та чылай илсе килчĕ каникулăн пĕрремĕш уйăхĕ. Шкулти «Подрост» лагерьте тус-тантăшпа, юратнă воспитательсемпе интереслĕ иртертĕмĕр вăхăта. Умра вара çуллахи каникулăн тата тепĕр икĕ уйăхĕ кĕтет. Вăл пире мĕн чухлĕ çĕннине, хаваслине парнелессе курсах тăратпăр тейĕн. Туссемпе çырлана та кайăпăр, эмел курăкĕ те пухăпăр, хĕвелпе те хĕртĕнĕпĕр...

Апла пулсан пурте пĕрле канатпăр, сывлăха çирĕплететпĕр. «Салам сире пурне те, туссем!» – тесшĕн эпир.

***«Подрост» лагерьте канакансем.***

Тăвай районĕ,
Элпуç шкулĕ.

**СĂНŸКЕРЧĔКРЕ:** хаваслă ушкăнпа канма та кăмăллă!

# Тĕпчевĕпе музей хăнисем паллашаççĕ



Çиччĕмĕш класран вĕренсе тухнă Екатерина Васильева çуллахи каникул вăхăтĕнче таврапĕлӳпе татах та тарăнрах интересленесшĕн. Сăлтавĕ те пур: кăçал ялта пожарнăйсене халалласа палăк уçрĕç. Вут-çулăмран пĕчĕк ачана хăтарнă çамрăка сăнарланă палăкра çынсене çак професси хăрушă, çав вăхăтрах питĕ пархатарлă пулнине кăтартасшăн пулнă.

Катя – шкулти «Çар мухтавĕ» музейĕн хастарĕ. Вăл кунти материалсеме усă курса хăех пысăк стенд хатĕрленĕ. Паллах, ял çыннисенчен те сахал мар аса илӳ, сăнӳкерчĕк пухнă. «Вĕсем манăçмаççĕ» ятлă самаях пысăк тĕпчев ĕçĕ çырнă. Унта çамрăк таврапĕлӳçĕ Энĕшпуç ялĕнче çуралса ӳснĕ, кайран хăйсен кун-çулне вут-çулăмпа кĕрешессипе çыхăнтарнă ентешсем çинчен каласа кăтартнă. Шел, вĕсем пурнăçран уйрăлнă ĕнтĕ, çавăнпа материал пухассипе хăш-пĕр йывăрлăхсем пуррине те пытармасть çамрăк тĕпчевçĕ. Уйрăмах ялта пушар хуралне йĕркеленĕ тапхăра – вăл 1929 çултанах пуçланать – çутатма йывăртарах тет. Çапах та Нягинсен династине пуçаракан Константин Петрович Крдыков-Петров пирки паха ĕçсем пухнă. Çак тĕпчевпе Катя Васильева МЧС тытăмĕнчи Пушар хуралĕн çулталăкне халалланă «Неопалимая Купина» Пĕтĕм Раççейри ача-пăчапа çамрăксен пултарулăх конкурсĕнче «Пултарулăхăн техника тĕсĕсем» номинацире пĕрремĕш вырăн çĕнче илнĕччĕ. Çуллахи каникул вăхăтĕнче Катя хăйĕн шыравне малалла тăсас тĕллевлĕ паллă таврапĕлӳçĕ И.Криков çырнă «На линии огня» кĕнекене тĕплĕн вуласа тухасшăн, тепĕр тĕпчев çырма ĕмĕтленет.

Катя каникул тесе шкултан пĕтĕмпех уйрăлмсть, мĕншĕн тесен «Çар мухтавĕ» музее тăтăшах çӳрекен чылай. Вĕсене вăл хăйĕн стендне никĕсе хурса хатĕрленĕ «Паттăр ентешсем – пирĕн мухтавлă пожарнăйсем» темăпа паллаштарать.

***Василий ЦЫФАРКИН.***

Вăрмар районĕ,
Энĕшпуç.

# Кашни кун çĕнни



Çуллахи каникул малалла пырать. Çак вăхăта усăллă та кăмăллă ирттерме тăрăшатпăр.

Çу кунĕ питех те ăш-пиллĕ тапхăр-çке пирĕншĕн! Пĕрисем лагерьте канса сывлăхне çирĕплетеççĕ, теприсем ашшĕ-амăшĕпе тĕрлĕ çулçӳревре пулма тăрăшать, виççĕмĕшĕсем урăх хуласемпе ялсене курса çӳреме çула тухаççĕ... Паллах, кашни самант кашниншĕн интереслĕ.

Тăван кĕтес ытларах кăмăла каять нумайăшне. Пирĕн шкулта çулсеренех сывлăхпа кану лагерĕ ĕçлет. Кăçал та вăл аван йĕркелерĕ хăйĕн сменине. Икĕ отряд пулчĕ. Канма кунта пурте пур. Тĕрлĕ вăйă, конкурс йĕркелетпĕр. Столовăйра тăрăшуллă та хăйсен ĕçне чунтан парăннă поварсем пĕçернĕ апат мĕнле тутлă! Темĕн те пур менюра.

Аслă ушкăнри ачасем шкул пахчине тирпейлес ĕçе хастар хутшăнчĕç.Кĕçĕннисем вара вĕсене пулăшрĕç. Екатерина Ивановна Григорьева воспитатель кашни кунах тĕрлĕ конкурс, ăмăрту, экскурси ирттерме пултарчĕ. Шкул библиотекарĕ Петр Михайлович Романов вулавăшри кĕнекесене «Сиплеме» йыхравласан, эпир хаваспах килĕшрĕмĕр. «Больницăра» çĕнĕ вĕренӳ çулĕ тĕлне нумай кĕнеке иккĕмĕш «пурнăç» илчĕ. Халĕ çав кĕнекесем каллех нумайăшĕн аллине лексе вĕсен кăмăлне уçĕ.

Тăрăн шкулĕнчи лагерьте канакансем пирĕн патра хăнара пулни те нумайлăха асра юлĕ. Пĕрле ирттернĕ «Хаваслă стартсенче» туслăх çĕнтерчĕ.

Усăллă та интереслĕ иртекен каникул кашнин асĕнче юласси иккĕленӳсĕр.

***Ульяна АНДРЕЕВА.***

Шупашкар районĕ,
Ишек шкулĕ.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 64-24-01

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 28-83-70
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1176 экз.

● ЗАКАЗ
№ 2240
Пичете çĕртме уйăхĕн 29-мĕшĕнче ала пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

Тантăш 3
25 №, 2016, çĕртме, 30

# Паян – вĕренӳри, спортри хастарсем, ыран – çĕршыв хӳтĕлевçисем




Патăрьел районĕнчи Хĕвеллĕ уçланкăра çамрăк çарçăсен «Зарница» тата «Орленок» çарпа спорт вăййисен черетлĕ 48-мĕш республика финалĕ уçăлчĕ.

Вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Светлана Петрова, ЧР çар комиссарĕ Александр Мокрушин тата ытти хаклă хăна çамрăк çарçăсене çак хăй евĕр уяв ячĕпе хĕрӳллĕн саламласа сывлăх сунчĕç.

Çамрăк çарçăсен «Зарница» тата «Орленок» çарпа спорт вăййисем яланах пĕлтерĕшлĕ. Унта хутшăнакан кашни çамрăкшăн пысăк уяв шутланать вăл. Уйрăмах республика шайĕнче иртекен финал вăййисем. Вĕренӳ çулĕнче пухнă пĕлĕве, çирĕпленсе тĕрекленнĕ шăмшакри вăй-хала тĕрĕслемелли вырăнçке. Кунта кашниех хăйне тивĕçлĕ хак парать. Ăна шута илсе малашлăх валли тĕллев лартать. Çарпа спорт вăййисем паянхи ăрушăн патриотизм шкулĕ çеç мар. Кунта вĕсен тĕрлĕ енлĕ аталанăвĕ палăрать. Ăс-тăн, пултарулăх, тавçăрулăх, çаврăнăçулăх, кĕтмен ларутăрура хăвна тытма пĕлсе кирлĕ йышăну тупасси – пурне те, пурне те «Зарницăпа» «Орленок» туптать. Çĕршывăмăр умне кĕтмен инкек сиксе тухсан ăна сирсе ярасси çитĕннисенчен çеç мар, хăйсенчен те килнине çамрăксем туяççĕ. Паян вĕсем вĕренӳре пултарулăхĕсене туптаççĕ пулсан, ыран вара çĕршывăмăрăн сыхлавçисем, хӳтĕлевçисем.

Финал ăмăртăвĕ хĕрӳ иртесси уяв пуçлансанах сисĕнчĕ. Хăватлă çар маршĕн кĕвви янăраса кайсан çарçăсем хăйсен стройпа утас ăсталăхне кăтартрĕç. Тĕрлĕ çар тумне тăхăннă отрядсем такăр çулпа марш çеммипе харăс пусса утса иртрĕç.

«Палатка хулинче» пурăнса кашни кун хăйсене тĕрлĕ енлĕ кăтартма пуçларĕç. Программăра палăртнă кирек епле конкурса та кăмăлпа хутшăнаççĕ. Кашни пĕтĕмлетĕве çирĕп жюри тăвать. Мĕнле кĕрешрĕн – çавăн пек кăтарту. Кунта никамăн та такам килсе пулăшасса кĕтмелли çук. Хăв вăйна, пĕлĕве, отряд çирĕплĕхне çеç шанмалла.

Паллах, пурте çĕнтерӳçĕ пулаймĕ, ăмăрту-вăйă саккунĕ çапла. Апла пулин те, ăмăртусен сывлăшĕ, илемлĕхĕ, хастарлăхĕ, палатка пурнăçĕн романтики, вучах хуранĕн яшка-пăтă техĕмĕ кашни çарçă чунне ĕмĕрлĕхех кĕрсе юлĕ.

Вăйă епле иртни çинчен тĕплĕнрех çитес номерте пулĕ.

*Элиза ВАЛАНС.*

# Ĕмĕтсем...



**Ульяна ЕФИМОВА:** Ӳкерме чунтан юрататăп. Уйрăмах çут çанталăка. Унта куçа илĕртекенни тем те пур-çке. Сăнама çеç пĕлмелле. Ӳссен питĕ художник пулас килет. Ун чухне пултарулăхăм тата вăйлăрах пулĕ. Юратнă çыннăмсен портречĕсене кăмăлтанах ӳкерĕттĕм. Юлташăмсене Вадима, Стаса, Сашăна, Максима, Катьăна, Ярославăна, Марийăна, Викăна та кӳрентермен пулăттăм. Вĕсене те асăнмалăх портретсем парнелĕттĕм. Ĕмĕтĕм çеç пурнăçа кĕтĕрччĕ ĕнтĕ.

**Катя КОРНИЛОВА:** Кĕнекесĕр пурăнаймастăп. Юмах-халап чунтан килĕшет. Унта ырри усаллине яланах çĕнтерет. Çавăнпа кăмăла каять çавнашкал хайлавсем. Эх, килти вулавăш уçас килет те... Унта нумай-нумай кĕнеке вырнаçтарăттăм. Ан тив, пирĕн пата вулама килĕштерекенсем кашни кун çӳреччĕр. Çĕнĕ кĕнекесемпе чунтанах паллашчăр. Аслă ăрурисене вара хамах кĕнекесемпе паллаштарăттăм. Каçсерен кĕнекери сăнарсем пирки вуласа парăттăм.

**Вика ЖУРАВЛЕВА:** Мана та художник пулас ĕмĕт канăç памасть. Юратнă вĕрентекене Алина Николаевна Даниловăна тĕрлĕ ӳкерчĕксемпе савăнтарăттăм. Хăйĕн хитре сăнне те тăрăшса ӳкерĕттĕм.

Эпир иккĕмĕш класран вĕренсе тухрăмăр. Класри 21 ачаран 16-шĕ арçын ачасем. Апла пулин те эпир, хĕрачасем, вĕсемпе питĕ туслă пурăнатпăр. Малашне те килĕштерсе, ăнланса пурăнасчĕ. Пирĕн туслăх çапла ĕмĕрĕпех тăсăлтăрччĕ. Шкултан вĕренсе тухсан та тĕл пулса пĕр-пĕрне пулăшса пырасчĕ. Манас марччĕ, туслăхран пахи çĕр çинче урăх нимĕн те çук.

***Елчĕк районĕнчи Елчĕкри пуçламăш шкулăн вĕренекенĕсен ĕмĕчĕсемпе Луиза ВАСИЛЬЕВА паллашнă.***

# Асăрханулла пул – инкек санран пăрăнĕ

Шупашкарти 78-мĕш ача садне çак кун тата пилĕк çĕртен хĕрачасемпе арçын ачасем килсе çитрĕç. Кунта тĕп хуламăрти çул-йĕр хăрушсăрлăх патшалăх инспекцийĕн уйрăмĕн инспекторĕсем «автохула» уçрĕç.

Çакнашкал вĕренӳ лапамĕ пирĕн хулара пурĕ çиччĕ.



Хулара транспорт питех те нумай пулнине шута илсе тата çул-йĕрте ача-пăчан асăрханулла пулмаллине вĕрентес тĕллевпе ятарласа уçаççĕ çавнашкал «автохулана». Кунта ачасем вăйă мелĕпе правилăсене вĕренеççĕ, «водитель» те, çул урлă каçакан та пулса кураççĕ. Теорие практика занятийĕсенче çирĕплетеççĕ.

Лапам чăн-чăн урама аса илтерет. Кунта çуртсем çук. Анчах транспорт валли çул, тротуар та, хĕресле çулсем те, светофорсемпе çул паллисем пур. Вĕрен кăна. Хамăрăн пурнăç хамăр алăра пулнине шута илме çеç тăрăшмалла. Инкек ан сиксе тухтăр тесен çул-йĕр правилисене яланах асра тытмалла.

**САНӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** «автохулари» занятисем.



# Ачасен савăнăçĕ



Кирек епле ÿсĕмри ачана та уяв калама çук пысăк савăнăç. нимĕнпе те виçейми хаваслăх кÿрет. Йĕритавра мĕн пулса иртнине пĕчĕкскерсем çивĕчрех тата айванларах йышăнаççĕ-çке. Хуть те мĕнле уяв та вĕсемшĕн – чунтанах кĕтнĕ, тĕлĕнтермĕш асамлăх. Сурхури, Çĕнĕ çул, çуралнă кун – шутлама пуçласан чăннипех те ачасен уявĕсем нумаях та мар иккен. Пĕчĕк çыннăн пурнăçĕнче вĕсем ытларах пулсан мĕн тери аванччĕ!

Мăн Этмен ял тăрăхĕн депутачĕ Владимир Горбунов пуçарнипе вырăнти чи пĕчĕк ачасем валли «Сывă-и, хаваслă çулла!» уяв йĕркеленĕ. Хаваслă мероприяти ачасен ашшĕ-амăшĕ хăйсен вăйĕпе ăсталанă ача-пăча площадкинче иртрĕ. Шăпăрлансене саламлама Хĕрлĕ Чутай район администрацийĕн пуçлăхĕн заместителĕ, экономика тата пурлăхпа çĕр ыйтăвĕн пайĕн ертÿçи Алина Ярабаева, Мăн Этмен ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Татьяна Артемьева килсе çитрĕç.

Ачасем виçесĕр савăнăçне пытармарĕç.




# Тăрăшулăха кура – хаклавĕ



Ырă ĕмĕтпе çунатланакан, пуласлăхне телейлĕ курас текен çын наянлăх мĕнне пĕлмест. Тăрăшулăхне кура пулнă ÿсĕмĕсене курса савăнать те тата ытларах хавхаланать вăл.

Хĕрлĕ Чутайри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулта вĕренекен Алиса Замуткина пуçламăш классенченех вĕренÿре лайăх паллăсемпе ĕлкĕрсе пырать. Ытларах гуманитари ăслăлăхĕсене килĕштерет вăл, çак енĕпе пултарулăхне туптать. Çулсерен тĕрлĕ шайри олимпиадăсемпе викторинăсене, пултарулăх ăмăртăвĕсене хастар хутшăнать. Çĕнтерÿ патне чунтан ăнтăлаканскерĕн пухмачĕ грамотăсемпе, дипломсемпе, Хисеп хучĕсемпе, Тав çырăвĕсемпе пуянлансах пырать. Сăмахран, 2013-2014 вĕренÿ çулĕнче кăна вăл çирĕм ытла хавхалантарăва тивĕçнĕ.

Алиса 2009-2016 çулсенче Хĕрлĕ Чутайри ачасен искусство шкулĕнче фортепиано уйрăмĕнче вĕреннĕ. Май уйăхĕн вĕçĕнче вăл патшалăх экзаменĕсем тытнă, искусство шкулĕнчен вĕренсе тухнине ĕнентерекен свидетельствăна та алла илнĕ. Çавăн пекех ăна искусство шкулĕн пурнăçĕнче хастарлăх кăтартнăшăн грамотăпа наградăланă. Фортепиано калама вĕреннĕ çулсенче хĕрача музыка енĕпе районта иртекен «Çамрăк виртуоз» конкурсра виçĕ хутчен çĕнтернĕ. Шкул ачисемпе студентсен регионсем хушшинчи «Музыка – манăн чун канăçĕ» пултарулăх конкурсĕн призерĕ те пулнă вăл.

Яваплăха çирĕп туяканскере темиçе çулах класра староста пулма суйланă. Районта иртекен наукăпа практика конференцийĕсене хастар хутшăнать вăл. Иртнĕ çулсенче акă математика, чăваш чĕлхи, биологи предмечĕсемпе малти вырăнсене йышăннă.

Алисăн кăсăкланăвĕсем пысăкланса та анлăлансах пыраççĕ. Пике çулсерен иртекен пĕтĕм Раççейри «Манăн пĕчĕк Тăван çĕршывăм: çут çанталăк, культура, этнос» конкурсăн республика тапхăрĕнче алă ĕç ăстисем çинчен хатĕрленĕ тĕпчев ĕçĕпе иккĕмĕш вырăна тухнă.

Пĕтĕм Раççейри предмет олимпиадисене те вăл кашни çулах хутшăнать. Кăçал, сăмахран, ОБЖ, тăван ен культури тата географи предмечĕсемпе призер пулнă, ытти çулсенче вара чăваш тата вырăс чĕлхисемпе палăрнă.

Ăс-тăнпа тавракурăма кунсерен аталантармалла. Кунта вара кĕнеке, хаçат-журнал вулани пысăк вырăн йышăнать. Алиса çакна асра тытса тăтăшах районти тĕп вулавăша çул тытать. Чăваш авторĕсем çырнă чылай кĕнекене вуланă вăл. Уйрăмах Людмила Сачкован «Чĕкеçĕм, чĕкеç» калавĕ килĕшнине палăртать. Халĕ хĕрача ют çĕршыв литературипе кăсăкланма пуçланă: Вальтер Скотăн «Айвенго» хайлавне вулать.

Кĕнекерен ывăнсан Алиса алă ĕçĕпе аппаланма тытăнать. Халĕ вăл пир çине вĕтĕ шăрçапа тĕрлесе илемлĕ картинăсем хатĕрлет. Тĕрлĕ тĕслĕ çиппе шăрçасенчен тĕрленĕ чăрăш туратти çинче ларакан уйăп кайăкĕ питĕ хитрен курăнать. Унччен хĕл кунĕсенче Алиса тăваткалласа пĕчĕк ÿкерчĕксем тĕрленĕ, амăшĕпе пĕрле çекĕлпе çыхса пукан виткĕçĕсем хатĕрленĕ, çав ĕçсемпе ял тăрăхĕн куравне хутшăннă.

Саккăрмĕш класра вĕреннĕ чухне те асра юлмалли самантсем нумай пулнă. Кăçал призывниксен кунĕнче маттур хĕрачана ЧР ветерансен республикăри пĕрлешĕвĕн председателĕ Н.Семенов пĕтĕм Раççейри «Эпир патриотсене ÿстеретпĕр» конкурсăн асăну паллипе наградăланă. Çак хисепе вăл ахальтен тивĕçмен. Алиса шкул пурнăçĕнче патриотизм юхăмне аталантарас, шкул имиджне лайăх енчен кăтартас тесе сахал мар тăрăшать. Иртнĕ çул вăл Аслă Çĕнтерÿ пулнăранпа 70 çул çитнине халалласа иртекен сочиненисен район конкурсĕнче çĕнтернĕ, унтан çĕршыв шайĕнчи конкурсра та палăрнă. Кăçалхи вĕренÿ çулĕн-че район администрацийĕн вĕренÿ пайĕ ăна обществăлла пурнăçра хастарлăх кăтартнăшăн грамота та панă.

Çуллахи каникул пуçлансанах Алиса патне тепĕр савăнăçлă хыпар килнĕ. Вăл пĕтĕм Раççейри «Ăрусен палăкĕсем. Ăруран ăрăва» акцире икĕ номинацире çĕнтернĕ. Пĕр ĕçĕнче аслашшĕн вăрманпа çыхăннă кун-çулĕпе ĕçĕсем çинчен, ырă ята ĕмĕрлĕхе хăварас тесе ун ячĕпе аллея уçни пирки каласа панă; тепринче – çемьере аслашшĕн ĕçне малалла тăсни, вăрмана хисеплесе пурăнни пирки çырнă.

Çу кунĕсем çитнĕ май ачасен канмалла пек туйăнать. Алиса вара кăмăлне кура вăхăтне туллин ирттерме тăрăшать: пахчара ĕçлесе кĕрсен алла йĕппе çип е кĕнеке тытать, тутлă апат-çимĕç пĕçерме хăнăхать, уçă сывлăшра çÿресе эмел курăкĕ пухма та ÿркенмест. «Тăрăшмасăр ÿсĕм пулмасть», – тет хĕрача.

Пуласлăх пирки шухăшланă май мĕнле професси суйласа илесси те канăç памасть ăна. Ачасене юратнăранах воспитатель е вĕрентекен пулас шухăш тĕвĕленнине пытармасть. Тепĕр пысăк ĕмĕт те каçсерен лăпкă çывăрма памасть-ха ăна: хăçан та пулин Хура тинĕс хĕрне, «Артека» кайса курасчĕ. Хальлĕхе вара Алиса республикăри лагере кайма тÿр килсен те савăнать.

*Лариса ПЕТРОВА.*
Хĕрлĕ Чутай районĕ.

➲➲➲ 1-мĕш стр.



° Юлашки шăнкăраври чыслав.

# Иртнĕ çулла...

## Тĕлĕкри пек иртрĕ çав самант

Тӳрех киле мар, асламăшĕ патне кĕчĕç вĕсем шăллĕпе. Вăйĕ çуккине сиссе, хăйне тĕлĕкри пек туйса диван çине аран ларчĕ. Кӳлĕ хĕрринче мĕн пулса иртнине Даниил асламăшне тĕпĕ-йĕрĕпе васкаса каласа пачĕ. Паша вара çаплипех пĕр сăмах та чĕнеймерĕ. Куçĕ умĕнчен сывлайми выртакан Максим çаплипех кайма пĕлеймерĕ. Хăй вара вилĕмпе куçа-куçăн тăнине ăнланса илсе çӳçенчĕ, çапах та çынна инкекрен хăтарнăшăн хĕпĕртерĕ.

– Ах... Çынна пулăшни сăвап-ха, анчах хăвăрпа та инкек пулма пултарнă-çке, – терĕ асламăшĕ хăраса ӳкнĕскер.

– Асанне, хăв калашле инкек ура айĕнчен сиксе тухать. Çавăнпа та ун пекки кирек кампа та пулма пултарать-çке, – вăйсăррăн сăмах хушрĕ арçын ача.

Паша паттăрлăхĕ пирки ашшĕпе амăшĕ, Сергей Владимировичпа Надежда Михайловна пĕлчĕç те, ывăлĕ çине пĕрремĕш хут курнăн шăтарасла пăхрĕç.

– Паша!.. Чăнах-и? Эсĕ хăв та ача кăна-çке, – терĕç те вĕсем, çав самантра урăх нимĕн те калаймарĕç.

Çав синкерлĕ куна паян та ассăн сывласа аса илет Паша. Хăй пăлханнине палăртмасăр сăмах çăмхине сӳтрĕ вăл.

– Тĕрĕссипе, вăл саманта тĕпĕ-йĕрĕпе аса илейместĕп. Чи тарăн вырăнта Максим путнăран йывăрлăха çаклантăм. Çӳçĕнчен сĕтĕрсе тухас терĕм те, кĕске кастарнăран ниепле те шухăшланă пек тăваймарăм. Çухалса каймасăр урапа çаклатрăм. Пĕтĕм вăя пухса унăн пурнăçне çăлса хăварас тесе, малалла ишрĕм те ишрĕм. Пĕрремĕш пулăшăвне те хамах патăм. Ара, шкулта вĕрентнĕ вĕт. Тухтăрсем те пĕрре мар тĕлпулу ирттернĕ. Ишме пĕлмен Максим аслисемсĕр шыва кĕме кайни – вăл тунă пысăк йăнăшсенчен пĕри. Мана хама атте улттăра чухнех ишме вĕрентнĕ, – терĕ Паша.

Унччен ăçта вĕренме каясси пирки ятарласа шухăшламан вăл. Халĕ ăна çăлавçă профессийĕ кăсăклантарать.

– Çынна пулăшасси – сăваплă ĕç. Çавăнпа та эпĕ хама МЧС тытăмĕнче куратăп. Мана хулара мар, ялта пурăнма килĕшет. Кайăк-кĕшĕк юрлани, вăрман кашлани, ирсерен хĕвел йăл-йăл пăхса шевлине тавралăха илем сапалани кăмăла çĕклет. Е тата пулла кайни мĕн тери савăнăç маншăн. Каллех аттене пула ку енĕпе «чирлерĕм». Темиçе çул каялла пилĕк килограмм таякан карп тытрăм! Ун чухне çапла вăлта хулкки çине пăхса ларатăм. Сасартăк вăл çухалчĕ. Туртса пăхрăм, темскер турткаланса тапкаланма пуçларĕ. Вăлта çиппине хăвăртрах хам паталла туртма тытăнтăм. Çыран хĕрринелле çывхарнăçемĕн хайхискер хытăрах туртăнчĕ. Сысна çури пек çурăмлă карп мĕнпур вăйĕпе вăлтаран вĕçерĕнме тапăçса шывран сике-сике тухса тапкаланчĕ. Çыран хĕрринче пĕрре сулахаялла, тепре сылтăмалла туртăнса тарма хăтланчĕ. Çапах туртса кăлартăмах. Вара чылайччен ун çине тĕлĕнсе пăхрăм. Мĕн тери тутлă апат хатĕрлерĕ анне! Çисе тăранмалла мар техĕмлĕскерĕн тути халĕ те асра. Е тата тавралăхри аслă вăрман камăн чунне ырă кӳмĕ? Асамлă вăй пур унта: чуна уçаканни, пурнăçра мĕнпур вак-тĕвек çине ала сулса тĕнчере илем пурри çинчен аса илтерекенни, хитрен пурăнма хистекенни, вăй-хăват хушаканни. Е тата Валем Ахун сăввилле каласан:

Тăван çĕршыв вăл пирĕн –
Пĕрре анчах. Пĕлер хакне.
Тăван çĕршыв вăл пирĕн –
Асран кайми атте-анне, – терĕ çамрăк.

Спорта чунтан юратакан Паша шкул çумĕнчи сывлăхпа кану лагерĕнче тусĕсемпе волейболла, баскетболла вылярĕ. Çутçанталăкра пулса чунне килентерчĕ. Ĕнтĕ лагерь кунĕсем хыçа юлчĕç. Июль уйăхĕнче вара «Орленок» лагерьте пулса савăнĕ. Ку путевкăна вăл Максима çăлнăшăн тивĕçнĕ.

Чăн та, Паша шкулти хастарсенчен пĕри. Вăл кирек епле мероприятисене кăмăлпа хутшăнать. «Зарница» çарпа спорт вăййинче те хастарлăхĕпе палăрнă. Килте те пултаруллă. Ашшĕ-амăшне, асламăшне кирек ăçта та тăтăш пулăшать.

– Эпĕ нимĕнле ĕçе те тиркеместĕп. Ку арçын, ку хĕрарăм ĕçĕ тесе нихăçан та каласа курман. Сарайĕнче тăрăшма кăна мар, пӳртре апат пĕçерме, кашăк-чашăк, урай та çума пултаратăп. Пурте хĕпĕртеççĕ вара. «Пирĕн Паша çитĕнчĕ. Пĕр ĕçрен те хăрамасть», – теççĕ. Ун пек калани чуна хăпартлантарать те ĕнтĕ. Манăн хăвăртрах шкултан вĕренсе тухса юратнă профессие алла илес килет, – тет Паша.



° Çут çанталăкшăн та ырă ĕç тăвать Паша.

## Хама çăлакана пысăк тав!

Максим Владимиров кăçал виççĕмĕш класран вĕренсе тухрĕ. Хăйне çăлакан Пашăпа пĕрле лагерьте канчĕ вăл. Иртнĕ çулăн синкерлĕ кунне аса илме ыйтсан:

– Эп хам та вăл саманта ытлашши астумастăп. Тĕлĕк евĕр пулчĕ те. Тантăшсемпе аслисемсĕрех кӳлĕ хĕрринче киленеттĕмĕр. Сасартăк ура шуса кайрĕ, шыв хăй патнелле туртса кайрĕ... Хам ишме те пĕлместĕп вĕт-ха. Аслисен асăрхаттарăвне темшĕн ăша хывман çав эпĕ. Инкек тӳсрĕм те, малашне ун пек хăтланмастăпах. Республикăри ытти ачасене те хытарсах калатăп: ишме пĕлмесен кӳлĕ хĕррине ан та пыр. «Шывăн турачĕ çук» текен каларăша асра тытмаллах. Тата манас марччĕ: Паша пек паттăрсем çывăхра пулмасан та пултараççĕ. Хамăн çăлавçа вара тем пысăкăш тав сăмахĕ калатăп, – терĕ Максим хăюсăртараххăн.

Максима юлташĕсем чăн-чăн артист теççĕ. Спектакльсенче выляма чунтан кăмăллать. Хăйне шанса панă рольсене чун-чĕре витĕр калăпласа куракан савăнтарать.

– «Вăрман пулăшу ыйтать» инсценировка хамăн чĕрене те пырса тиврĕ. Унта Якур пичче ачасене çутçанталăка упрамаллине вĕрентет. Чăн та, пирĕн тавралăхпа туслă пулмалла-çке. Кун пирки çĕр çинчи кашни çыннăн пĕлмелле. Çырмасем ишĕлсе ан юхăнччăр тесе кашнин йывăç лартмалла. Кайăксем валли çулсерен сырăш тумалла, апатпа сăйламалла... Çав спектакль сыпăкĕнче эпĕ Якур пичче сăнарне вылярăм. Пĕрремĕш класранпах драма кружокне юратса çӳретĕп, паянхи кунччен те сцена çинче эпĕ. Çакă манăн чун иленĕçĕ, – тет Максим.

Максим хальлĕхе хăй ăçта вĕренме каяссине палăртман.

– Ӳссе çитем-ха, куç курать унта. Çапах та çĕршыва юрăхлă çын пулатăпах. Унччен вара аннене хамăн пархатарлă ĕçсемпе савăнтарам. Эпĕ ăна килте яланах пулăшатăп. Паша пекех нимĕнле ĕçрен те хăрамастăп, – çирĕплетет мал ĕмĕтлĕскер.

...Пулăра Паша. Вăлта хулкки çурринчен ытларах шыва чикĕнсе тăраканскер, сасартăк тайăлса тӳрленчĕ. Унтан сисĕни-сисĕнми чĕтренсе аяккалла шуса кайрĕ. Шунăçемĕн путса пычĕ. Вăлта вĕçĕнче йывăр та чĕрĕ япала хыттăн чĕтреннине туйса ăна ерипен çыран хĕрринелле сулăнтарчĕ. Унăн йывăрăшĕ çамрăк пулăçăн пĕтĕм чунне хаваслантарчĕ. Пулă хытăрах тапкаланнăçемĕн унăн сăмси татăлса каясран сыхланчĕ. Кĕçех пысăк пулă çырана тухса выртрĕ.

– Пĕве хĕрринче яланах çакнашкал лайăх кăмăл пултăрччĕ манăн. Шăрăха парăнтарас тесе шывра киленекенсен те килĕсене савăк кăмăлпа таврăнмалла пултăрччĕ, – терĕ Паша.



° Спортра та хастарлăхĕпе палăрать.

**_Элиза ВАЛАНС._**

Етĕрне районĕ, Кăкшăм.

РЕСПУБЛИКА УЯВӖ

# Ӑстасене те, юрӑҫсене те пӗрлештерчӗ Акатуй




Акатуй – чӑвашсен сумлӑ уявӗсенчен пӗри. Ака-суха ӗҫӗсем вӗҫленнӗ ятпа иртекенскере анлӑн паллӑ тунӑ. Авалтан пыракан йӑла паянччен те сыхланса юлни, вӑл ҫулсерен вӑй илсе пыни савӑнтарать. Акӑ кӑҫал та Республика кунӗнче Шупашкарта Пӗтӗм чӑвашсен Акатуйӗ кӗрлерӗ. Ӑна паллӑ тума хӑнасем ҫӗршывӑн чылай регионӗнчен килсе ҫитрӗҫ. Мускав, Пермь, Оренбург, Пенза, Саратов, Пушкӑртстанпа Тутарстан, Самар тата Эстони чӑвашӗсем инҫе ҫула кӗскетсе тӗп хуламӑра пуҫтарӑнчӗҫ.



Республикӑри тӗрлӗ районтан килнӗ пултарулӑх ушкӑнӗсем те йышлӑнччӗ. Тӑван халӑхӑн илемлӗ юрри-кӗвви кунӗпех янӑрарӗ ҫак хаваслӑ кун. Хӗрлӗ лапамри, Анне палӑкӗ умӗнчи сценӑсем ҫинче чӑваш тумӗллӗ ентешсен пултарулӑхӗпе киленме май пулчӗ. Кӑмӑллӑ, савӑнӑҫлӑ йӑлкулӑпа ҫуталчӗҫ аякран килнӗ тӑвансен сӑн-пичӗсем.

– Питӗ тараватӑ кӗтсе илчӗҫ пире кунта. Юрра-ташша та хаваспах йышӑнчӗҫ, хыттӑн алӑ ҫупса хавхалантарчӗҫ. Малашне Шупашкара тата та килме ӗмӗтленетпӗр, – пӗлтерчӗҫ Самар облаҫӗнчи Шунтал районӗнчи Чӑтӑрлӑ ялӗнчи «Ҫӑлкуҫ» ача-пӑча чӑваш халӑх фольклор ансамблӗнче пултарулӑха туптакан ҫамрӑксем – 15 ҫулти Дмитрий Мясников, 16-ри Алена Тимофеева, 13-ри Оля Зайцева, 13-ри Таня Макарова тата 17-ри Юля Зайцева. Тӑван халӑх юрри-ташшипе мӗн пӗчӗкренех кӑсӑкланаканскерсем сцена ҫинче чӑнчӑн артист пекех тытрӗҫ хӑйсене.




Республикӑри кашни районӑн харпӑр «кил картийӗ» чылайӑшне илӗртрӗ. Темӗн те курма май килчӗ унта: ял ӑстисен алӑ ӗҫӗсем, йывӑҫран ӑсталанӑ савӑт-сапа, тӗрлӗ курӑкран ҫыхса-явса тунӑ хушпусем... Акатуя уявлама пухӑннисем кашни «ҫурта» кӗрсе тухрӗҫ, «кил хуҫисем» вӗсене хӑйсем хатӗрленӗ апат-ҫимӗҫпе кӑмӑлтан сӑйларӗҫ.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

● КАЛАВ ҪЫРАТПӐР ХАМӐРАХ

## Ял илемӗ

Кунӗпе ӗшеннӗ хӗвел, шевлисене пӗр хӗрхенмесӗр ҫӗр ҫине сапаласа, часрах сывӑрма выртма васкан хыҫне пытанасшӑн. Хуларан район центрне васкакан автобусран пӗр хӗр анса юлчӗ. Сӑнӗпе ҫирӗм-ҫирӗм икӗ ҫулсенче. Кӑвак кӗпепе джинс шӑлавар тӑхӑннӑ. Вӑрӑм хура ҫӳҫне хыҫалалла тирпейлӗн пуҫтарса ҫыхнӑ. Яштака илемлӗ хӗре такам та ӑмсанмалла. Аллинче икӗ пакет тытнӑ, хулпуҫҫи урлӑ ҫӑмӑл сумка ҫакса янӑ. Хӗр шоссерен пӑрӑнса анчӗ те ыраш хушшипе тӑсӑлакан сукмакпа Пилешкасси еннелле утрӗ. Яла ҫитме икӗ ҫухрӑм ытларах утмалла. Тулли ыраш пучахӗсем ачашшӑн сӗртӗнсе пуҫ таяҫҫӗ, сывлӑх сунаҫҫӗ тейӗн. Чӑтаймарӗ хӗр – чарӑнса тӑрсах пучахсене алӑпа тытса пичӗ ҫумне ачашшӑн сӗртӗнтерчӗ. Тулли пучахсем лӑпкӑ ҫилпе чӳхеннине чылайччен пӑхса тӑчӗ.

Ыраш пуссинче тухсанах вӑрманалла тӑсӑлакан сукмак ҫине ӳкрӗ. Кунта тӗрлӗ курӑк шӑрши сӑмсана кӑтӑклать. Йывӑҫ-курӑк сиплӗхӗ кӑмӑла ҫӗклет. Ҫырмари шӑнкӑртатса юхакан тӑрӑ шывпа питне йӗпетрӗ – ах, епле уҫӑ! Пӗр-икӗ утӑмранах – ҫӑлкуҫ. Кунтах шыв ӗҫсе кӑмӑла уҫӑлтарма такам курка та хурса хӑварнӑ. Пӑр пек сиплӗ шыва ӗҫсе чуна кантарнӑ хыҫҫӑн хӗр малалла утрӗ. Шыв кӑмӑла уҫрӗ, вӑй-хӑват пачӗ.

Вӑрмантан тухсан ҫул икке пайланать: пӗри аналла, тепри – тӑвалла. Ирина тӑвалла илсе каяканнине суйларӗ. Кӗҫех урама кӗчӗ. Правлени ҫуртне ҫӑмӑллӑнах тупрӗ. Кунта ӑна хуҫалӑх ертӳҫи кӗтсе илчӗ. Вӑл шӑпах вырӑнтаччӗ. Петр Арсентьевич ҫамрӑк агроном валли пурӑнма пӳлӗм те тупса хунӑ. Вӗсем пынӑ чухне Раис аппа чуста ҫӑратчӗ.

Раиса Тимофеевна ҫак урамри пӗр ҫуртра пӗччене пурӑнать. Тӑван хуҫалӑхра ӗмӗрӗпех ӗҫлесе тивӗҫлӗ канӑва тухнӑ. Чи малтанхи вӑхӑтра дояркӑра тӑрӑшнӑ, каярах пӑрусем пӑхнӑ сӗрте ӗҫленӗ. Икӗ ачи тахҫанах тӑван килтен ҫунатланса вӗҫсе тухса кайнӑ ӗнтӗ. Раиса Тимофеевна хӗре кӑмӑллӑн йышӑнчӗ. Часах ватӑпа ҫамрӑк пӗр чӗлхе тупрӗҫ. Утмӑлтан иртнӗ пулин те ӗнепе икӗ сурӑх, чӑх-чӗп усрать-ха вӑл. Ирина кӗтӳрен таврӑннӑ выльӑх-чӗрлӗхе картишне кӗртрӗ. Кӗҫех Раис аппа кунӗпех ешӗл ҫаран ҫинче ҫӳресе тутӑ килнӗ ӗнене сума тухрӗ. Пур ӗҫе те вӑр-вар тума хӑнӑхнӑ кил хуҫи тулли витрепе пӳрте кӗчӗ. Унччен витрене ҫӑрса лартнӑ чуста хӑпарма та ӗлкӗрнӗ ӗнтӗ. Кил хуҫи хӗрарӑмӗ купӑста кукли туса кӑмакана хыврӗ. Пӳртре техӗмлӗ шӑршӑ сарӑлчӗ. Ватӑпа ҫамрӑк тин ҫеҫ суса кӗнӗ кӑпӑклӑ сӗтпе вӗри кукӑль ҫирӗҫ. Мӗн тери паха апат!

Каҫхи апатлану хыҫҫӑн Ирина кино пӑхса илчӗ те ҫывӑрма выртрӗ. «Хуҫалӑхра мӗнле йышӑнӗҫ-ши ӑна, ҫӗнӗ специалиста? Мӗнле шӑпа кӗтет-ши малашне?» Ҫапла нумайччен ҫывӑрса каяймасӑр шухӑшласа выртрӗ хӗр. Каярахпа, лӑпкӑн кӑна ҫывӑрса кайнӑскер, ирхине ултӑ сехетре вӑранчӗ. Ҫӑмӑл апат ҫисе правлени ҫурчӗ еннелле васкарӗ. Вӑл ҫитнӗ тӗле кантурта председательпе тӗп бухгалтер кӑначчӗ. Кӗҫех ытти специалистсем те килсе ҫитрӗҫ.

Планерка ҫамрӑк агрономпа паллаштарнинчен пуҫланчӗ. Сӑмах вара уй-хир ӗҫӗсем епле пыни ҫине куҫрӗ. Чылай ыйтӑва сӳтсе-пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн тыр-пул, пахчаҫимӗҫ еплерех ҫитӗннине курма вырӑна тухса кайма тиврӗ специалистсен. Вӗсен йышӗнче – Ирина та. Киле каҫ пуласпа кӑна таврӑнчӗ. Вӑл таврӑннӑ ҫӗре Раиса Тимофеевна чӑх какайӗнчен техӗмлӗ яшка пӗҫерсе хатӗрленӗ те ӗнтӗ. Кил тӗрӗшри ытти ӗҫе те тума ӗлкӗрнӗ.

Ҫапла кун хыҫҫӑн кун, эрне, уйӑх иртрӗ. Хуҫалӑх уй-хир ӗҫӗсене вӑхӑтра та тирпейлӗ вӗҫлерӗ. Ҫамрӑк агроном йӗтем ҫинчен, уй-хиртен таталма та пӗлмерӗ. Ҫакӑнтах хӑйӗн шӑпине те тупрӗ. Валера Семеновпа паллашрӗ. Каччӑ кашни кун ӗҫ хыҫҫӑн хӗр патне сукмак такӑрлатрӗ. Раис аппана та кил тӗрешре пулӑшкаларӗ. Ҫамрӑк вӑй-хӑватӗпех кил хуҫи хӗрарӑмӗ ҫӑл пурине юсарӗ.

Валера пӗлтӗр кӑна ҫар тивӗҫӗсене пурнӑҫласа тӑван тӑрӑха таврӑннӑ. Хулана пурӑнма каяс темен – ялтах юлнӑ. Тӑван хуҫалӑха водительте ӗҫлеме юлнӑ. Ашшӗ-амӑшӗ те аякка ярасшӑнах пулманни сисӗнт.

Часах хӗрпе каччӑ хушшинчи туслӑх ҫирӗпленсе те тӗреклене пычӗ. Кӗр мӑнтӑрӗпе ҫӗнӗ ҫемье тӗвӗленчӗ – пурте тӗлӗнмелле туй кӗрлеттерчӗҫ ҫамрӑксем. Хуҫалӑх та мӑшӑра ял канма каймашкӑн путевка уйӑрса пачӗ.

Халӗ ҫамрӑксем чаплӑ кил-ҫурт та ҫавӑрчӗҫ ӗнтӗ. Выльӑх-чӗрлӗх те йышлӑ усраҫҫӗ, ача-пӑча ӳстереҫҫӗ. Ҫамрӑк ҫемье – ял илемӗ. Ӗҫ ҫынни вара яла пушшех те илем кӳрет. Ҫавсем мар-и вара ял малашлӑхӗ, ячӗ-сумӗ, пуласлӑхӗ? Ял илемӗ – ӗҫ ҫынни.

*Таня УГЛОВА.*

Вӑрнар районӗ,
Туҫи Мӑрат.






## «Çичĕ нота»
### сăмах вăчăри



## «Пĕр сăмах урлă»
### пуçватмăш

**Кунта пĕр сăмах хăйĕн ўкерчĕкĕпе пĕрле вырнаçнă та ĕнтĕ. Ыттисене ун çумне çыпăçтарăр:**

Вут–Рис–Ява–Алăк–Пулă–Рака–Сиен–Така–Тупа–Елена–Кĕсел–Лиана–Омега–Оскар–Альянс–Артист–Витали–Канапе–Ковпак–Нарспи–Натака–Нептун–Романс–Руанда–Сомали–Страус–Татлан–Январь–Акахата–Алазани–Арабика–Атакама–Колодин–Летчица–Миллион–Наварра–Нарбада–Одорант–Ролтон–Самолет–Сникерс–Терраса–Тетрадь–Тоннель–Тунката–Училище–Еременко–Светофор–Спиваков.




**Сăмахсен тупсăмне тупма нота паллисем пулăшĕç. Анчах та унта нотăн пĕрремĕш саспалли çеç çырăннă.**

1. Çĕрлехи вĕçенкайăк. 2. С.Аслан романĕ. 3. Чăваш композиторĕ. 4. Йăлара усă куракан савăт. 5. Чăваш журналисчĕ тата писателĕ. 6. А. Гайдар повеçĕнчи сăнар. 7. Шупашкарта уçăлнă пĕрремĕш кинотеатр. 8. Авалхи грексен мифологийĕнчи сăнар. 9. Чăваш писателĕ, «Пăва çулĕ çинче» повесть авторĕ. 10. Сăвă кĕвĕлĕхне йĕркелекен сăмах пайĕ. 11. Аш-какайран хатĕрленĕ апат-çимĕç. 12. Тбилиси хулин ĕлĕкхи ячĕ. 13. Тинĕс пулли. 14. А. Кăлкан пьеси. 15. Утă-улăм упрамалли хуралтă. 16. Кăнтăрти халăх. 17. Хĕллехи XIV Олимп вăййисен тĕп хули. 18. Çĕвĕç хатĕрĕ. 19. Спорт ăмăртăвĕ. 20. Чăваш Республикинчи юханшыв.

## Сăмах вăчăри



1. Совет штангисчĕ, тĕнчере чи нумай рекорд тунă спортсмен. 2. Паллă киноактер, хăй вăхăтĕнче вăл Шупашкарти вырăс драма театрĕнче те вылянă. 3. Ĕлĕк лашасене çĕрле çитерме çўрени. 4. Европăри пĕчĕк çĕршыв. 5. Юханшыври тарăн вырăн. 6. Чехословаки /вăл вăхăтра çавăн пек ят пулнă/ космонавчĕ. 7. Музыка хайлавĕ. 8. Дани писателĕ, юмахçи. 9. В. Беллини опери. 10. Çĕр пичĕ çумĕнчи сий. 11. Пулă тытмалли хатĕр. 12. Йăлара усă курмалли хатĕр. 13. Математика пайĕ. 14. «Тăван ...» /журнал/. 15. Я. Ухсайăн поэми. 16. Ялхуçалăх ĕçĕ. 17. Кăнтăрти ял. 18. Илемлĕ, çав вăхăтрах сиенлĕ хурт-кăпшанкă. 19. Спорт хатĕрĕ. 20. Пуçĕ тура пек, хўри çурла пек, кăшкăрать мулла пек /туп. юм./. 21. Ĕлĕкхи тимĕр укçа. 22. Карап çинчи е стройкăри русма. 23. Пĕчĕк пиччен пўрни кукăр /туп. юм./.

## «Чăваш апачĕ»
### пуçватмăш

**Çаврашкасене саспаллисем вырнаçтарнă. Вĕсем нимĕнле йĕркене те пăхăнмаççĕ. Çапах та, вĕсемпе усă курса чăваш апачĕн ятне вулама тăрăшăр.**






## Сăмахкаçмăш

**Сылтăмалла:** 1. Чечек. 3. Пирĕн тăрăхра ўсекен çак тĕштырăран кофе те хатĕрлеççĕ. 5. Пĕтĕм тырпулăн пĕрлештернĕ ячĕ. 7. Çак культурăна кăнтăрта пирĕн эрăччен 6-7-мĕш ĕмĕртех çитĕнтерме пуçланă. 8. Йывăçран хатĕрленĕ стро].материал. 10. Улма-çырла. 12. Çăка хуппинчен хатĕрленĕ чĕртавар.

**Аялалла:** 1. Тултан сакăр кĕтеслĕ, шалтан тăватă кĕтеслĕ /туп. юм./. 2. Раççейре çак хурт-кăпшанкă 20 пин ытла тĕслĕ. 3. Чечексем ўсекен ирĕклĕ вырăн. 4. Тырпулăн вырса илнĕ хыççăн юлакан пайĕ. 5. Уйра, тырă пуссинче пурăнакан, хăйĕн ятне каласа юрлакан вĕçенкайăк. 6. Çуллахи çут çанталăк пулăмĕ. 9. Йывăçран пўрт-çурт лартнă чухне усă куракан шурлăх курăкĕ. 10. Ытларах ăшă енче çитĕнтерекен тĕштырă.

***Юрий ФРОЛОВ* (Шупашкар) *хатĕрленĕ.***

Лицензия Министерства образования и молодежной политики ЧР
(серия 21Л01 №0000558, регистрационный № 1095 от 22.04.2016 г.)
Свидетельство о государственной аккредитации
(серия 21А01 № 0000728, регистрационный № 508 от 28.04.2016 г.)

Государственное автономное профессиональное образовательное учреждение Чувашской Республики

# «Чебоксарский профессиональный колледж им. Н.В. Никольского»

Министерства образования и молодежной политики Чувашской Республики

## Пирĕн алăксем яланах уçă!

***Яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç умĕнче пĕр ыйту – малаш пурнăçа мĕнле профессипе çыхăнтармалла? Çак тата ытти тĕрлĕ ыйтăва паян Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ, ЧР вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, педагогикăра 30 çул тăрăшакан, Шупашкарти Н.В.Никольский ячĕллĕ профессии колледжĕн директорĕ Станислав Порфирьевич ГРИГОРЬЕВ хуравлама килĕшрĕ.***



**– Станислав Порфирьевич, çак тапхăрта пин-пин çамрăка професси илме пулăшнă колледж. Пурнăç хăвăрт улшăннă май Эсир те вырăнта тăмастăрах.**

– Çамрăксен кăмăлĕпе тĕллевĕсене яланах шута илсе ĕçлетпĕр. Хăй вăхăтĕнче пир-авăр промышленноçĕ валли кадрсем хатĕрленĕ вĕренӳ организацийĕ тĕллевĕсене улăштарса пырать. Эпир автомобиль промышленноçĕ, машиностроени, пулăшу ĕçĕсен сфери валли кадрсем хатĕрлетпĕр. «Реклама», «Информаци тытăмĕсен отраслĕсем тăрăх», «Промышленнăç оборудованине пухса вырнаçтарасси тата техника эксплуатацийĕ», «Автомобиль транспортне техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрасси тата юсасси», «Товароведени тата потребитель таварĕсен пахалăхĕн экспертизи», «Экономика тата бухгалтери учечĕ» специальноçсемпе професси пĕлĕвĕ паратпăр.

**– Шупашкарти механикăпа технологи техникумĕ тата педагогика колледжĕ пĕрлешнĕ хыççăн абитуриентсене мĕнле çĕнĕлĕхсем кĕтеççĕ?**

– Пĕрлешӳ пире çунатсене тата та анлăрах сарма май пачĕ. Нумай функциллĕ центр хута ятăмăр, воспитательсен квалификацине ӳстерекен курссем уçрăмăр, пуçламăш классен педагогĕсене хатĕрлеме тытăнасшăн. Вăтам шкултан тата 9-мĕш класран вĕренсе тухнă çамрăксене суйламалăх специальноçсем пур. Кăнтăрлахи уйрăмра та, куçăн мар меллепе те пĕлӳ илейĕ. Çĕнĕ специальноçсем уçасшăн. Кăçал "дизайн", "логистика" специальноçсене 25 бюджет вырăнĕ уйăрнă.

**– Колледж çĕршывра чап илнине те пĕлетĕп…**

– Çитĕнӳсем аталанма вăй-хал хушаççĕ. Студентсене 2-3 курсранах предприятисемпе организацисенче, учреждениесенче производство практикинче пулнисĕр пуçне вĕсен заказĕсене те пурнăçлаççĕ. Тĕслĕхрен, реклама уйрăмĕнче вĕренекен Кристина Петрова тĕп хулари "Мониторинг Центрĕпе вĕренӳ аталанăвĕ" автономи учрежденийĕ ыйтнипе "Вырăс чĕлхиллĕ шкулсенче чăваш чĕлхипе литература кабинетне йĕркелесси" проект хатĕрлерĕ. Çав тери пысăк ĕç тума пултарнă студентка.

**– Студентсем мĕнле предприятисенче практикăра пулаççĕ?**

– Питĕр, Çырчаллă хулисенче, Мускавпа Ленинград облаçĕсенчи предприятисене производство практикине яратпăр. Шупашкарти агрегат, электроаппарат завочĕсемпе, «Чăвашавтотранс» предприятипе, «Акконд транс», «Лента», «Красная поляна», «Галерея Медиа-Чебоксары» пĕрлешӳсемпе, "Абрис", "Три-R", "Брындинсен типографийĕ" организацисемпе нумай çуллăх килĕшӳсем тунă. Çак предприятисен ертӳçисем пирĕн студентсен квалификацийĕ çӳллĕ шайра пулнине палăртаççĕ, хăйсем патне хапăлласах ĕçе илеççĕ.

**– Малалла вĕренес текенсене мĕнпе савăнтарма пултаратăр?**

– «Шкул-колледж-аслă шкул» вĕренӳ тĕллевĕпе ăнăçлă ĕçлетпĕр. Колледж дипломне илнисем Мускаври патшалăх дизайн тата технологи университетĕнче, Мускаври В.С.Черномырдин ячĕллĕ патшалăх уçă университетĕнче, Мускаври «МАМИ» патшалăх техника университетĕнче, Питĕрти патшалăх технологипе дизайн университетĕнче, И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче тата сумлă ытти аслă шкулта вĕренме пултараççĕ.

**– Пултаруллă çамрăксен пуласлăхĕ кăсăклантаратех Сире…**

– Халĕ тĕнчере ĕç профессийĕсене «симĕс çутă» паракан WORLDSKILLS юхăм аталанса пырать. 2015 çулта "WORLDSKILLS RUSSIA в Чувашской Республике" конкурса 12 компетенципе irttерчĕç. "Графика дизайнĕ" компетенцие пирĕн преподавательсем хатĕрлерĕç. Унта ЧПКн çичĕ студенчĕ хутшăнчĕ. Г.Я.Казанова преподавательпе Лена Максимова студентка Саранск хулинчи тупăшура 2-мĕш вырăн йышăнчĕç. Шăпах ун чухне Республика Пуçлăхĕ М.В.Игнатьев Никольский ячĕллĕ колледжăн пуласлăхĕ пысăккине палăртрĕ. WORLDSKILLS конкурса воспитательсене хатĕрлеме тытăнтăмăр, çак тĕллевсене пурнăçа кĕртсе регион фестивалĕ irttертĕмĕр. Студентсем Раççей, тĕнче шайĕнчи конкурссене, конференцисене хутшăнаççĕ. Акă, Владимир Шимин Пĕтĕм тĕнчери «Фотопризер» конкурсра 2-мĕш вырăна тухнă, Мая Горчашкинапа Ирина Шуйская «Нарспи» авторĕн пултарулăхне тĕпчесе «Константин Иванов тата чăваш тĕнчи» Раççей шайĕнчи ăслăлăхпа практика конференцийĕнчен дипломсемпе таврăннă.

**– Кăçал Чăваш Енре Ĕç çыннин çулталăкĕ…**

– Ĕç çынна илем кӳнипе пĕрлех малалла аталанма май парать. Колледжра хушма пĕлӳ паракан курссем ĕçлеççĕ. Кăмăл тăвакансем 50 яхăн рабочи профессийĕнчен пĕрне суйлама пултараççĕ.

Кăçал шкултан вĕренсе тухакансене çапла калам: «Шупашкарти професси колледжĕн алăкĕсем сирĕншĕн яланах уçă!»

***Анатолий АБРАМОВ калаçнă.***

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** С.П.Григорьев директор РФ Патшалăх Думин депутачĕпе Алена Аршиновăпа тата студентсемпе пĕрле.

### прием студентов на 2016 – 2017 учебный год

| Код и наименование специальности, присваиваемая квалификация | Срок обучения | Формы обучения | Примечание |
|---|---|---|---|
| **09.02.04 Информационные системы (по отраслям)** Квалификация выпускника – ***техник по информационным системам*** | 3 г.10 мес. на базе 9 кл. | Очная | Бюджетные места С полным возмещением затрат на обучение |
| | 2 г.10 мес. на базе 11 кл. | | С полным возмещением затрат на обучение |
| **15.02.01 Монтаж и техническая эксплуатация промышленного оборудования (по отраслям)** Квалификация выпускника – ***техник-механик*** | 3 г.10 мес. на базе 9 кл. | Очная | Бюджетные места С полным возмещением затрат на обучение |
| | 2 г.10 мес. на базе 11 кл. | | С полным возмещением затрат на обучение |
| **23.02.03 Техническое обслуживание и ремонт автомобильного транспорта** Квалификация выпускника – ***техник*** | 3 г.10 мес. на базе 9 кл. | Очная | Бюджетные места С полным возмещением затрат на обучение |
| | 2 г.10 мес. на базе 11 кл. | | Бюджетные места С полным возмещением затрат на обучение |
| | 3 г.10 мес. на базе 11 кл. | Заочная | Бюджетные места С полным возмещением затрат на обучение |
| **38.02.01 Экономика и бухгалтерский учет (по отраслям)** Квалификация выпускника – ***бухгалтер*** | 2 г.10 мес. на базе 11 кл. | Заочная | С полным возмещением затрат на обучение |
| **42.02.01 Реклама** Квалификация выпускника – ***специалист по рекламе*** | 3 г.10 мес. на базе 9 кл. | Очная | Бюджетные места С полным возмещением затрат на обучение |
| | 2 г.10 мес. на базе 11 кл. | | С полным возмещением затрат на обучение |
| **44.02.01 Дошкольное образование** Квалификация выпускника – **воспитатель детей дошкольного возраста** | 3 г.10 мес. на базе 9 кл. | Очная | Бюджетные места С полным возмещением затрат на обучение |
| | 2 г.10 мес. на базе 11 кл. | | Бюджетные места С полным возмещением затрат на обучение |
| | 3 г.10 мес. на базе 11 кл. | Заочная | Бюджетные места С полным возмещением затрат на обучение |
| **54.02.01 Дизайн (по отраслям)** Квалификация выпускника – **дизайнер** | 3 г.10 мес. на базе 9 кл. | Очная | Бюджетные места С полным возмещением затрат на обучение |
| | 2 г.10 мес. на базе 11 кл. | | С полным возмещением затрат на обучение |

***Прием в Колледж осуществляется по заявлениям лиц, имеющих основное общее или среднее (полное) общее образование.***

| Форма обучения | Прием документов |
|---|---|
| ***Очная*** на базе основного общего образования (9 классов) на базе среднего общего образования (11 классов) | ***с 1 июня по 15 августа**** |
| ***Заочная*** | с 1 июня по 20 ноября |

*Для поступающих на специальности 42.02.01 Реклама с 01 июня по 10 августа
54.02.01 Дизайн с 01 июня по 10 августа

***К заявлению прилагаются документы:***
- документ, удостоверяющий личность (оригинал);
- документ государственного образца об образовании (оригинал или заверенная копия);
- 4 фотографии (3 х 4 см);
- медицинская справка - форма 086-у (для поступления на обучение по специальностям: 15.02.01 Монтаж и техническая эксплуатация промышленного оборудования, 44.02.01 Дошкольное образование).

На отделении дошкольного образования готовятся кадры для дошкольных образовательных учреждений по специальности 44.02.01 «Дошкольное образование».
Специальность «Преподавание в начальных классах» (на платной основе).

Контакты: 8 (8352) 45-01-96; 8 (8352) 45-01-65; 8 (8352) 45-01-65; 8 (8352) 45-37-65
Адрес: г. Чебоксары, ул. Урукова, 8.
**Колледж имеет благоустроенные общежития.**
**Телефон приемной комиссии:** 37-46-60, 8-927-667-46-60
**Сайт:** http://chmtt.info.ru
**Эл.почта:** *chmtt@list.ru*
***Электронная почта приемной комиссии:*** *pk@chmtt.info*

Р